ГЕННАДИЙ ЮМАРТ

# УЛĂП ЕВĔРЛĔ ПУЛАСЧĔ

Шупашкар - 2014

**ГЕННАДИЙ ЮМАРТ**

# УЛĂП ЕВĔРЛĔ ПУЛАСЧĔ

**Сăвăсемпе куçарусем**

**Кĕçĕн çулхи ачасем валли**

**Чăваш кĕнеке издательстви**

**Шупашкар - 2014**

## ÇĔНĔ ÇУЛ УЯВĔ

Епле лăс чăрăш хӳхĕм,
Епле хитре ун теттисем!
Çуса тăрать йĕпхӳ-хĕм –
Вут-кайăк евĕр çутисем.

Чечек пек илĕртӳллĕ
Çут çăлтăр чăрăш тăрринче.
Ав йăпшăнать сар тилĕ,
Пакши сикет турат çинче.

Килет те вашаватлăн
Шур Хĕл мучи туяпала,
Хавассăн саламлать вăл,
Телей сунать Çĕнĕ çула.

Карталанса юрлатпăр,
Ташша яратпăр ушкăнпа.
Мĕнпур тавралăх капăр,
Инçе вĕçетпĕр шухăшпа.

## ЙĔЛТĔРПЕ

Çил пуçлать пите касма –
Вирхĕнсе пыратăп.
Ман ума тухать çырма –
Юр ăшне чăматăп.

Тĕрмешсе çине-çинех

Çырана хăпартăм.
Темиçе анса тинех
Тикĕс йĕр хăвартăм.

## КАЙĂКСЕМ МĔНШĔН ТĔРЛĔ ТĔСЛĔ

Асанне мана калать:
Кураксем каяççĕ, тет,
Хура тинĕс леш енне,
Тӳсеймеççĕ хĕл кунне...
Хура тинĕс шывĕпе
Чӳхенеççĕ пуль вара,
Çавăнпа та тĕсĕпе
Йăмăх пурçăн пек хура.

Асанне мана калать:
Сарăкайăк пĕчĕк, тет,
Ытарми чĕлхеллĕскер,
Сарă-сарă тĕслĕскер...
Сарă тинĕс шывĕпе
Чӳхенсе вăл илнĕ-тĕр,
Сар лимонăн тĕсĕпе
Сăрланса вăл килнĕ-тĕр.

Чи-чи! тесе тем калать,
Кăсăя тус чилетет
Çӳллĕ-çӳллĕ туратра,
Сарă, симĕс хăй, хура...
Виçĕ тинĕс шывĕпе

Чӳхенсе ҫӳренӗ-тӗр,
Ҫавӑнпа та виҫ тӗспе
Вӑл вара пӗвеннӗ-тӗр.

## ПАКША

Эй, тамаша!
Йӑрӑ тусӑмҫӑм пакша,
Эс ӑҫта ҫӳрен,
Мӗншӗн кӗттерен? –
Вӑйӑм пӗтрӗ юр ашса.

Ҫӑмламас хӳре!
Ма чӗнместӗн Атнере?
Е чирлерӗн-и,
Е писейрӗн-и,
Е ҫӳретӗн инҫетре?

Пурччӗ сан валли,
Тусӑмҫӑм, сӑйланмалли!
Эс ӑна ялан
Хапӑл пулакан –
Акӑ мӑйӑр сан валли!..

Манӑн йыхрава
Илтеймерӗн ҫав-ҫавах.
Уттарам киле
Килнӗ йӗрпеле.
Курӑн мӑйӑрне хӑвах...

Ак тамаша!
Сисеймен эп, апăрша:
Эс вăрман хĕрне,
Манăн çул çине,
Тухнă ларнă-мĕн, пакша!

Ай маттур иккен:
Йăлт та ялт инçе сикен!
Юрĕ тарăнран,
Тунсăхланăран
Хирĕç тухнă эс пĕччен.

## ПЕРКЕЛЕШĔР, ВЫЛЬĂР ЮЛАШКИ ЮРПА

Сив кунсем, сыв пулăр,
Хĕл, ылмаш çурпа.
Перкелешĕр, выльăр
Юлашки юрпа.

Сивĕ хĕл илемĕ –
Шурă-шурă юр.
Хĕл часах килеймĕ,
Юр тытса эс кур!

Çу, курак тăманĕ!
Кураксем килсен
Çуркунне тапранĕ.

Ярăнăр унччен!

## ПĔЧĔК ТУРАТНА ПАМĂН-ШИ МАНА?

Лăпсака йăмра
Сар кăчăкăра.
Уншăн сар хĕвел –
Имлĕхлĕ эмел.
Ĕнтĕ иртенпе
Пинĕ-пинĕпе
Ылтăн хурт сĕрлет,
Пыл шăрши кĕрет.
Чĕлтĕр çулçăсем –
Вĕлтĕр çунатсем
Хускалмаççĕ-ха,
Сас тумаççĕ-ха.
Çамрăкрах турат
Симĕсрех тăрать.
Эй, йăмра, йăмра!
Темшĕн чунăмра
Кĕвĕ вăранать,
Кĕвĕ шăранать.
Ман шăхличĕпе
Шăнкăрч сассипе
Шăхăртас килет,
Сас парас килет.
Пĕчĕк туратна
Памăн-ши мана?

## КĂСĂЯ

Чăнк-чăнк-чăнк!
Такам шаккать.
Пăхрăм та чӳречерен –
Кăсăя иккен такать.
Йыхăрать мана пӳртрен:
– Эй!
Чи-чӳ!
Чĕв-чĕв-чей!
Кур-ха:
Кунĕ –
Хип-хитре.
Урама тухсамччĕ,
Эй!
Мĕн сĕнксе ларан пӳртре?..
Ах, чăнах та урамра
Ытарма та çук аван!
Шыв шаркать-мĕн лапамра,
Йăл кулать хĕвел паян.
Кăсăя туссен сасси
Янăрать çинçен-çинçен.

## ТĔЛĔК

Туссем, эп куртăм каçхине
Тем чухлĕ шоколад:
Кĕреймĕ вăл тарилккене,
Тен, пĕр хутаç пулать.

Вăрантăм – çĕтрĕ куçăмран,
Ыйтатăп аннерен:
– Пĕлместĕп, – терĕ вăл, –
Курман,
Уй, кай, тĕлĕнтерен...

– Хăв патăн-çке шоколадне:
«Ме кучченеç» тесе.
– Хăçан?
– Çывраттăм ун чухне.
Хăв килтĕн-çке илсе.

– Ăçтан тупам-ха эп ирех?
Ниçта та эп тухман.
Тен, куртăн пулĕ тĕлĕкре? –
Илни те çукчĕ ман...

– Мĕскер вăл тĕлĕк?
– Тĕлĕк-и?
Мĕне ĕмĕтленен –
Çывăрнă чух курнать мĕлки.
– Вăл кино пек иккен.

Ай-ай аван-çке тĕлĕкре!
Шоколадне пит шел:
Туссем, хăналама сире,
Ах, пурччĕ лайăх мел!

## КУРАК ЧĔППИСЕМ

Пирĕн ял йăмраллă,
Йăмрисем йăвallă,
Йăвисем куракллă,
Куракĕсем чĕпĕллĕ,
Ах, чĕпписем –
чăр! та чăр!

## МАРИНЕПЕ ЛĔПĔШСЕМ

Кайрĕ пĕчĕк Марине
Сар чечеклĕ сăрт çине.
Сар чечеклĕ сăрт çинче,
Сар лĕпĕшсем хушшинче
Сиккелесе вăл çӳрет,
Савăнăçлăн ĕнерлет.
Килчĕ тухрĕ çăмламас –
Никамран та хăрамасть,
Хăвалать лĕпĕшсене,
Макăртать Маринене.
Çитрĕ ашшĕ васкаса,
Ячĕ вăл йытта хуса.
Таврăнаççĕ лĕпĕшсем,
Ярăнса вĕçеç вĕсем.
Марине тути кулать,
Сулхăн сăнĕ çуталать.

## ÇĂЛТĂРСЕН ВĂЙЙИ

Вăхăт çитрĕ кĕме –
Тĕлĕкре çӳреме.
Йăлтăрти çăлтăрсем,
Чăлтăрти çăлтăрсем,
Чăл та чал çуталса,
Чĕлтĕр-чĕлтĕр кулса,
Йыхăратăр пире
Инçетри тӳпере.
Сирĕн вăййăр иккен
Питĕ савăк, ĕлккен:
Пытанатăр самант,
Тупăнатăр самант.
Ав, тепри юнашар
Ярăнайрĕ йăр-яр! –
Чăмрĕ-шим çырмана? –
Курăнмасть вăл мана...
Йăлтăрти çăлтăрсем,
Чăлтăрти çăлтăрсем!
Çĕкленесчĕ çӳле –
Кĕмелле-çке киле.

## УЛĂП ЕВĔРЛĔ ПУЛАСЧĔ

Улăп, улăп, теççĕ,
Улăп вăйлă пулнă, теççĕ.
Уйăха та хĕвеле
Вăл хăпартнă, тет, çӳле –
Çĕмрĕлсе ан кайччăр,

Тĕнчене курнайччăр.
Улăп евĕрлĕ пуласчĕ,
Ырă ĕç тăвасчĕ.

Улăп, улăп, теççĕ,
Улăп паттăр пулнă, теççĕ.
Тĕрлĕрен тăшмансене
Вăл кĕртмен тăван çĕрне –
Чăл та пар тустарнă,
Вăр-хурахĕ тарнă.
Улăп евĕрлĕ пуласчĕ,
Паттăр ĕç тăвасчĕ.

## УЙĂХПИ ВАЛЛИ

Кил-ха, асанне,
Манăн вăйă кĕтесне.
Пĕчĕкрех кравать
Пĕр енне лартма юрать.
Парăпăр ăна
Уйăхпи-хĕрачана.
Уйăх мĕскĕне
Илнĕ теттĕн хăй патне.
Тăлăхскер хальччен
Йăлăхрĕ пуль пĕр-пĕччен.
Кайрĕ пуль шăнса,
Куртăрччĕ вăл ăшăнса.
Пултăр вăл аппа,
Выльăттăм вара унпа.

Çыр-ха, асанне,
Космонавт пичче патне:
Кайтăр караппа,
Таврăнтăр хĕрачапа.

## ЯРĂНТАРĂТТĂМ СИРЕ

Кач-кач качака,
Мăйраки ун катрака.
Унăн ик мăйракинчен
Икĕ кукăль çакрăм.
Качакине чи мала,
Виçĕ йытта хыçала
Кӳлтĕм те вĕренпелен,
Пушшине шарт! çапрăм.
Вирхĕнейрĕç хайхисем.
Тутлă çимĕçшĕн вĕсем
Талпăнаççĕ хамлатса –
Канăç çук виç йыттăн.
Вĕсенчен хăрарĕ те,
Хӳрине тăратрĕ те
Качака тăрс-тăрс! тапса
Мекекек! тет хыттăн.
Мекекек те хам-хам-хам!
Юрласа пыратăп хам.
Сисеймерĕм – пасара
Çитрĕмĕр хавассăн...
Килĕр, тусăмсем, часрах!
Çунашкам çине лартса

Ярӑнтарӑп хӑвӑра
Кӑмӑлӑр пулсассӑн.

## КӐЧӐРМИ

Кӑчӑр-кӑчӑр кӑчӑрми,
Ан чӑрмала чарӑнми –
Эс пӳрте кӗресшӗн,
Ашкӑнса ҫӳресшӗн.

Хуп-хура та ҫӑмламас,
Лутрашка, хырӑмламас,
Эс тӑмана пуҫлӑ,
Пысӑк хӑрах куҫлӑ.

Пурӑн эсӗ ҫырмарах,
Шапапа пӗр йӑварах:
Иксӗр туслӑ пулӑр,
Тӑм йӑвалӑр, выльӑр.

Ҫинҫешке урусемпе
Ӑмӑртса эс чуп ҫилпе.
Ҫуйӑхаш та хыттӑн,
Пӑлтӑр-палтӑр ыткӑн.

Кӑчӑр-кӑчӑр кӑчӑрми,
Ан чӑрмала чарӑнми:
Эп сана кӗтменччӗ,
Хӑнана чӗнменччӗ.

Алăк уçăлчĕ те ак –
Сикрĕ кĕчĕ пĕр кушак.
Ах, кушак, хăратрăн –
Сехрене хăпартрăн.

## ХĔРЛĔ КАЙĂК

Кăсăя юман çинче
Сиккелерĕ пĕр кана.
Ешĕл çулçă хушшинче
Çăмăл мар тупма ăна.

– Симĕс кайăк, авă, кур:
Симĕс ун çуначĕсем,
Пĕсехи çинче ун пур
Сарă-симĕс тĕкĕсем, –

Терĕ пĕчĕк Эрине. –
Эпĕ – хĕрлĕ кайăк, – тет,
Шăлкалать хăй тумтирне.
Кăсăя пек сиккелет.

Хĕрлĕ тутăр та пушмак,
Хĕрлĕ тĕслĕ ун кĕпе.
Кайăк пек çунат сулма
Хăлаçланать аллипе.

## ШĂПА СĂВВИСЕМ

1

Пĕрремĕшĕ – Пĕркке,
Иккĕмĕшĕ – Икенпи,
Виççĕмĕшĕ – Виçенкей,
Тăваттăмĕшĕ – Тавăт,
Пиллĕкмĕшĕ – Пилтирек,
Улттăмĕшĕ – Ултиван,
Çиччĕмĕшĕ – Çичкеней,
Саккăрмĕшĕ – Сакарук,
Тăххăрмĕшĕ – Тăхтапи,
Вуннăмĕшĕ – Вуниле,
Сик тух!

2

Эпĕ – кашкăр,
Эс – куян,
Эсĕ – тилĕ,
Эс – упа,
Эсĕ – пурăш,
Эс – пăши,
Эсĕ – сунарçи.

3

Мак-мак Макмаккай,
Так-так Такмаккай,
Шак-шак Шакмаккай,
Чак-чак Чакмаккай,
Хак-хак Хакмаккай,
Куç хупмашкăн эсĕ кай!

4

Икĕ тантăш, икĕ хĕр –
Пӳлерпипе Сăварпи
Пĕр канашлă пулчĕç те
Тухрĕç Шурă Атăла.
Шур пăрахут килчĕ те –
Кайрĕç шур Шупашкара.
Юлассу килмест пулсан
Хăвăртраххăн тух та чуп.

5

Йăлтăр-йăлтăр
Çутă çăлтăр
Йăл çутаттăр,
Йăлтăртаттăр.
Çăлтăрсем патне пĕр харăс
Караппа ак пурте тарĕç.
Çывăрса юлаканни –
Хуралçи пулаканни.

**ТЫТ МАНА**

Эй, чуп, хăвала,
Пирĕнпе пĕрле выля!
Чирлĕ-чирлĕ çын пекех
Эс çӳретĕн тек-текех.
Пул вăр-вар, ан пул лӳппер,
Спортсмен пек эс ут чипер.

Эй, чуп, хӑвала,
Пирӗнпе пӗрле выля!
Эпӗ тарӑп – тыт мана,
Тытӑп эп вара сана.

## КУРӐНМАН ÇӖЛӖК

(Халӑх сӑмахлӑхӗнчен)

Ун чух атте çуралман,
Çуралма та шутламан –
Асаттепе тип варта
Çӳреттӗмӗр сунарта.
Çитӗнмен хӑвалӑхран
Сикрӗ тухрӗ ӑнсӑртран
Çуралман куян çури.
Курчӗ ӑна суккӑрри,
Урасӑрри çитрӗ те,
Алӑсӑрри тытрӗ те,
Туман çӗçӗ тупрӗ те
Тирне сӳрӗ асатте,
Тенкӗ çитми çӗр пуса
Ячӗ те ӑна сутса,
Пачӗ çӗлӗк туянса,
Халь çӳретӗп тӑхӑнса:
Çын куçне хӑй курӑнмасть,
Эп пуррине кӑтартмасть.

## ÇУМӐР

Шĕвелсе çывхарчĕ пĕлĕт,
Ячĕ вăл шерпет сапса.
Йăр-йăр хĕлĕх, пин-пин хĕлĕх
Тăчĕ кĕвĕ каласа.

Айккинче хĕвел çӳрерĕ,
Кĕренлетрĕ вĕсене.
Ункăн-ункăн эрешлерĕç
Тумламсем пĕве питне.

Карчĕ асамат кĕперĕ
Çичĕ тĕслĕ тĕррине:
«Тӳпене хăпарăр, – терĕ, –
Курăр çăлтăр тĕнчине!..»

## МЕРЕККЕ

– Эх, куртăм та мерекке! –
Тесе калать Каринкке.
– Мĕн вăл, – терĕм, – мерекке?
Каласамччĕ, Каринкке.
– Мерекке вăл... мерекке, –
Тесе пуçлать Каринкке. –
Лашине кӳлсе пĕрре
Тухрĕ, тет, Кукша хире,
Тиесе килет кĕлте,
Шăхăрса пырать çӳлте.
Лавĕ питĕ пысăкран,
Турттармашкăн йывăртан

Пулăшас тет лашине:
Илчĕ вăл пĕр кĕлтине,
Хăрах уран лав çинче
Йăтса пыртăь аллинче!..
Çакă пулать мерекке, –
Тесе калать Каринкке.
– Мерекке, эппин, вара –
Кулăш тавраш, мыскара!

## КУЛĂШЛА ЙĂРАН

Петĕрккепе Хветĕркке
Ахăлтатма чĕрĕ-çке.
Кулă чирĕ лекнĕрен
Тертленеççĕ кунсерен.
Акă йăран чавмалла,
Пахча çимĕç акмалла.
Кĕреçене илсенех
Чир аптратрĕ вĕсене:
Каçса кайса култарать,
Ĕçлеме чăрмантарать.
Пурпĕр сапрĕç шĕвĕрсем
Тĕрлĕ çимĕç вăррисем.
Шăтрĕ тухрĕ темĕн те,
Палласа илеймĕн те:
Кишĕр теес – укроп пек,
Укроп теес – курăк пек;
Пур пăрçаллă вĕлтĕрен,
Хĕрлĕ măкăньлĕ пиçен;

Пур суханлă сар кăшман...
Мĕн кăна шăтса тухман!

## ПĔЧĔКÇĔ ПАЙТУЛ

Чӳречерен пăхкалать,
Каллĕ-маллĕ уткалать
Йăпăр-япăр Кулине.
Кĕтрĕ-кĕтрĕ ывăльне,
Тухрĕ утрĕ урама
Шĕвĕрккине шырама.
Леш хĕç тытнă та алла,
Унталла та кунталла
Сулать унпа вăш та ваш,
Касăлать вĕлтрен чăш-чаш.
– Мĕн тăватăн, ăçтиçук!
Кĕр киле часрах, Куçук! –
Терĕ амăш çывхарса.
Леш каларĕ таварса:
– Куçук мар эп халь, Пайтул,
Малашне астунă пул.
– Е Пайтул эс, е Куçук –
Унăн уйрăмлăхĕ çук.
– Пайтул паттăр пулнă тет.
Ман ун пек пулас килет.
– Эп илтмен-çке ун çинчен.
– Ыйт-ха кӳршĕ Энтринчен.
Кайнă вĕсем ушкăнпа
Пĕр музее машшинпа.
Пайтул хĕçне тытрăм тет,

Ӳкереттӗм, чӑтрӑм тет.
Хурҫӑ хӗҫӗ кукӑр тет,
Кукӑр тет те йывӑр тет.
Пайтул паттӑр ҫав хӗҫпе
Ҫапӑҫнӑ улпутсемпе.
Пулнӑ тет вӑл утаман,
Патшаран та хӑраман.
Ун ҫарӗпе кунӗпе
Ҫапӑҫнӑ чухӑнсемпе.
Кунӗ тӑнӑ шартлама.
Йывӑр килнӗ кар! тӑма.
Кам хӗҫпеле, пӑшалпа,
Кам сенӗкпе, ҫавапа
Ҫапӑҫнӑ тет ун чухне.
Хурҫӑ хӗҫӗн хуҫӑкне
Вӑрҫӑ сӑрчӗ патӗнче
Тупнӑ тет Карай енче.
Пайтул пулнӑ чӑвашах,
Пытарма ҫав таврашах
Пытарнӑ тет Пайтула.
Тертлентернӗ те ытла,
Пӗри сутнӑ паттӑра,
Тытнӑ, ҫакнӑ тет вара.
– Темле вӑрҫӑ пулнине
Хам та пӗчӗкҫӗ чухне
Илтнӗччӗ кукаҫунтан,
Тӗлӗннӗччӗҫ ӑав унтан.
Халь атя киле, васка,
Сивӗнсе каять яшка.

– Кăтартма Пайтул хĕçне
Илсе кай-ха музейне.
– Юрать, юрать, Пайтулăм,
Эс хăв та паттăр пулăн.
Халĕ каяр килелле,
Çимелле, вăй илмелле...
Куçукпала Кулине
Хăвăрт утрĕç кил енне.
Савăнса ача палкать,
Пысăк çын пек пускалать.

**ТУХ, ВИННИ-ПУХ!**

Винни-Пух!
Винни-Пух!
Вылямашкăн тух!
Упа-упа утаман,
Кампала выляс-ха ман?
Тусăмсем килмен кунта.
Эс çӳрен пуль вăрманта?
Винни-винни, Винни-Пух!
Хăвăртраххăн эсĕ тух!
Чу-у-у!
Иккĕн ярнăпăр
Чуччу!

**АН ТИВ!**

Чи-чĕв-чив!

Чи-чĕв-чив!

Ах, ан пыр тĕм патне!

Ан хăрат чĕпсене.

Ах, ан тив!

Ах, ан тив

Эсĕ ман йăвама –

Хĕрĕме, ывлăма!

Эсĕ – улăп-этем.

Мĕнлерех-ха кĕртем

Ӳкĕте эп сана?

Тархаслатăп кăна:

Эп, ан тив, пĕчĕкскер,

Çерçи пек тĕссĕрскер,

Ан тив, хĕрлĕ хӳре,

Пурăнасшăн чĕре.

Чи-чĕв-чив!

Ах, ан тив!

**ТИРКЕШӲ**

– Э-э-эй, тăрнакка!

– Эсĕ ху лутака!

– Э-э-эй, тилпĕрен!

– Эсĕ – вĕлтĕрен!

– Эсĕ, эсĕ... – мармелад!

– Эсĕ – шоколад!

– Ха-ха-ха!

– Ха-ха-ха!

## УТЬĂККА

Утьăкка! Утьăкка!
Çитĕнсемччĕ маттуркка.
Хăлаçланса аллупа,
Талт! тапса яр урупа,
Вирхĕнсе вĕç вирелле,
Çăмăллăн сик çĕрелле.
Услап ӳкĕ урайне,
Эсĕ тăр ура çине.
Улăп пек пулсам патвар,
Çĕкленсем татах вăр-вар.

## ХĂВĂРТРАХ ÇИЕР

Асаннӳ икерчĕ
Пикенсех пĕçерчĕ.
Çу та сĕрнĕ ун питне,
Пыл та сĕрнĕ теприне.
Ав, пиччӳ çиет пĕччен,
Вăл çисе пĕтериччен
Хăвăртрах çиме пуçлар,
Ун пек пысăккă пулар.

## САНПАЛА ВЫЛЯСЧĔ МАН

– Хам-хам! Эй, Раман –
Никамран та хăраман!
Ма пăхмастăн ман енне?

Е илтместӗн чӗннине? –
Тет пӗр анчӑк Рамана,
Куҫ илми сӑнать ӑна:
Хӳрине те пӑтратать,
Ик уран та вӑл тӑрать.
Лешӗ ҫырла нӗтӗрет,
Камите асилтерет –
Кӑппи-каппи ҫинипе
Вараланнӑ пӗтӗмпе.
– Хам-хам! Эй, Раман!
Санпала вылясчӗ ман.
Ҫитӗ ӗнтӗ кӗттерсе,
Ҫитӗ ҫырла нӗтӗрсе!
Эй, Раман! Сисмен хутран
Ҫыртӑп акӑ урунтан.

## АН МАКӐР

Пӗчӗкҫеҫҫӗскерӗм,
Ҫывӑрах чиперрӗн.
Пӑрӑна-пӑрӑна ан макӑр –
Пӑрӑнса ларайӑн акӑ.
Чыхӑна-чыхӑна ан макӑр –
Чыхӑнса ларайӑн акӑ.
Туртӑна-туртӑна ан макӑр –
Туртӑнса ларайӑн акӑ.
Сан аннӳ те умӑнта,
Сан аҫу та ҫумӑнта.
Ӗҫес тесен – тюттю пур,

Выляс тесен – теттӳ пур.
Пӗчӗкҫеҫҫӗскерӗм,
Ҫывӑрах чиперрӗн.

## ИКӖ ҪУРА

Чупрӗ тухрӗ, – пӗлӗр-и? –
Пӗчӗкҫеҫҫӗ тем ҫури.
Хӑй ун-кун пӑхса илет,
Шур ҫӑмха пек сиккелет,
Ҫӗр ҫумне те йӑпшӑнать,
Сыххӑн-сыххӑн шӑвӑнать.
Ӑнсӑртран хура ҫӑмха
Сикрӗ пычӗ ҫывӑха.
Хай пуҫларӗҫ выляма –
Пӗр-пӗрне хӑвалама.
Шурри тарчӗ тӗм хыҫне,
Мяв-мяв! терӗ вӑл лешне.
Хамлатса ҫӳрет хури,
Лешӗ халь чӗнмест юри.

## ҪУЛҪӐ ТӐКӐНАТЬ

Ҫил ачи сархайнӑ ҫӑкана,
Илешет те пӑлхатать кӑна.

Вӗлтӗр ҫулҫӑ ҫӗрелле тарать,
Ҫил ачи те хыҫранах пырать.

Çул çинче выляççĕ çулçăсем, –
Карталаннă, çаврăнаç вĕсем.

Вĕлтĕр сарă çулçă хăвăртрах
Тытăнать чупма вĕсем тавра.

Пытанасшăн пулчĕ вăл çилтен –
Çил ачи унран юлмасть иккен!

## КАТĂРКАС

Катăр-катăр катăркас
Илĕртмешкĕн пит хавас.
Çырлине татма тăран –
Аллуна картах туртан:
Яшт! чикет те йĕппипе
Уткалатăн айккипе.
Ун тăпăрка çырлине
Тат сирсе тураттине.

## АЙЯРА

(Юлиан Тувим майлă)

Юрăçкасси ялĕнче,
Янтаян урамĕнче,
Пурăнать, тет, Айяра
Айяруçпа пĕр çуртра.
Пур, тет, вĕсен чиперкке,
Айярпи текен хĕркке.

Пур, тет, ывăл, маттуркка –
Юрă ăсти Айяркка.
Пур, тет, йытă та – Улай,
Пĕчĕк Улай-Айярлай.
Пур, тет, мăрăлкка кушак,
Юрăç-кушак Айяршак.
Çутă шуçăм çĕкленсен,
Йăпăр-япăр чей ĕçсен,
«Ай-я-ра!» тесе пĕрле
Кĕтеççĕ, тет, хĕвеле.
Шăпланаççĕ пĕр авка,
Мала тухать Айяркка,
Алă сĕлтсе ярать çеç –
Пурте юрра пикенеç.
Кӳршĕре те урамра
Юрă янрать: «Ай-я-ра!» –
Çурт умĕпе иртекен
Çав юррах юрлать иккен.
Лашапа килет Сарпай,
Сарă Сарпай-Айярпай,
Машшинпа иртет Макар,
Акар-Макар-Айяркар,
Çырупа çӳрет Çерук,
Вăрăм Çерук-Айярук.
Айяруçă-пулăçă
Пулла васкать пулĕ çав.
Кĕтӳпе каять Пракух,
Кĕтӳç Пракух-Айярух.
Ма юрламĕ шкул ачи –

Шкул ачи-Айярачи –
Вĕсене вĕрентекен
Хăй те халь Айяртекен.
Пĕтĕм кайăк таврара
Янратать: «Ай-я-ра-ра!..»
Юрăçкасси ялĕсем –
Пурте юрă ăстисем.

**ЭРНЮК АППА АЧИСЕМ**

(Сăвă-туптару)

Çич ача Эрнюк аппан,
Вĕсене паллатăр-и?
Çӳревре вĕсем паян,
Пĕринчен юлмасть тепри.

Чи малта утать Тунти,
Салтакла – тăн-тăн утти.
Тунти-тунти-тунти-тун!
Параппан тӳнтлетрĕ ун.

Иккĕмĕшĕ – Ытлари,
Янкăссăн каять юрри.
Янăрать урам варри:
– Харăс-харăс утар-и?

Виççĕмĕшĕ – Юн пике,
Сăнĕпе вăл – хĕм çеçке.
Тутăр çыхнă вăл хĕрле,

Ун кӗпи те хӗп-хӗрлех.

Йӑмӑкӗ ун – Кӗҫнерни,
Кӗҫӗнрех пулсассӑн та,
Ҫинҫереххӗн кӑшкӑрни
Илтӗнет таҫта-таҫта.

Пиллӗкмӗш ачи – Эрне, –
Йӑлтӑрти тухьяллӑскер.
Шӗлтӗр-шӗлтӗр пукане
Тейӗн эсӗ: пит чипер.

Шӑхӑртса ярать Шӑмат
Шӑнкӑрч сасӑллӑ шӑхличӗ.
Яр та яр пусса утма
Ҫӗнӗрен кашни вӑй илчӗ.

Ҫиччӗмӗшӗ – Вырсарни,
Выляса пырать хыҫра.
Мыскарасӑр пурӑнни
Пурӑнни те мар вара.

**КӖТЕРНЕ**

Илсе пачӗ те анне
Пурҫӑн тумлӑ пукане,
Тирпейлерӗм краватьне,
Тек чупатӑп ун патне.
Ачашлатӑп ун ҫӳҫне,

Çитеретĕп çимĕçне,
Е юрлатпăр хăш чухне,
Е ташлатпăр ташшине.
Вăл итлет эп хушнине,
Тăн! тăнлать каланине.
Вăл ман пепкем вырăнне,
Ячĕ унăн – Кĕтерне.

## АЧА-ПĂЧА ХУЛИНЧЕ

Чуччусем кунта тем чул,
Мĕн тĕрли кăна çук пуль!
Шикленеттĕмччĕ ларма,
Хăнăхрăм та ярăнма
Суллăнтăм çӳлтен çӳле
Сывлăшăм пӳлĕнмелле.
Тĕрлĕ пĕчĕк кăруççел –
Çаврăнма кăна эс пĕл:
Е тытса пыр карлăкран,
Е сиксе лар аякран.
Пĕринче, чăнах, тĕнче
Чалăшмашкăн тытăнчĕ.
«Ытлашши эс ан васка», –
Тет атте лăпка-лăпка.
Йăлăхсассăн ярăнса
Ыттипе кур савăнса.
Пĕчĕк ăйăр – çилçунат
Çĕкленет те усăнать,
Пускăчне пусма кăна

Ан шелле эс вăй-хална.
Кĕнекепе юмахри
Паттăрсем те тем тери
Илĕртеççĕ кăмăла:
Улăп ачи йышпала
Туслашма шутланă та,
Ачасене вăл кунта
Кăтартать хастарлăхне –
Карăнтарать уххине.
Çывăхрах – Лапшу Çтаппань,
Таврăнать вăл сунартан.
Ларнă çунашки çине,
Кӳлнĕ хăй куянсене.
Юланутçă Сентти пур,
Кĕвентине пит маттур
Утланса вăл чуптарать,
«Пăрăнăр!» – тет, кăшкăрать...
Пĕчĕккисен хулинче
Тĕлĕнмелли – пĕр тĕнче!

## ТУПТАРУСЕМ

1

Унсăр савăк мар Çĕн çул,
Ун тавра выля та кул.
Ешĕл чăрăш йăлтăрти,
Çитмĕл çиччĕ ун тетти.

2

Ту-ту-тут! Вăл кăшкăртать,
Темĕн те пĕр турттарать.

3
Му-ук! тесе макăрать,
Вăл пире сĕтне парать.

4
Пĕрре тухса пăхсассăн –
Çурла пулса курăнать,
Тепре тухса пăхсассăн –
Çăмха пулса курăнать,
Татах тухса пăхсассăн –
Таçта тарса пытанать.

5
Эп тапатăп урапа,
Эс пултар тытма алпа.

6
Вăл пулать-мĕн тĕрлĕрен:
Шăл тасатать ирсерен,
Тепри пушмак çутатать,
Леш тумтире якатать.

7
Уяв çитсен – çурт çинче
Вĕлкĕшет çил уççинче.

8

Сиплĕ-имлĕ куракран
Тунă тет ăна.
Чирлесессĕн ăнсăртран
Сыватать сана.

9

Кăнтăрта пурнать чĕр чун:
Йывăç çӳллĕш мăйĕ ун.

10

Юр пĕрчинчен пысăк мар,
Хăрамасть вăл этемрен:
Сĕмсĕркке те вăл хаяр,
Хыттăнах çыртать ӳтрен.

11

Çичĕ тĕслĕ пурçăн карă
Атăл урлă карăнать;
Йăмăх хĕрлĕ те сап-сарă,
Симĕс тĕслĕ курăнать.

12

Çатма çине сарăлать,
Кăвар çинче саралать,
Çу сĕрсессĕн – çуталать,
Тутлă çимĕç вăл пулать.

13

Хура çунат кайăк пур,
Тĕлĕнтермĕш хăват пур:
Пĕр сулать те çунатне –
Çухатать кун çутине.

14

Чĕлтĕр-чĕлтĕр шур чĕнтĕр
Турат çине тирĕннĕ.
Çил тухсассăн силлентĕр –
Çĕр çине вăл сирпĕнĕ.

15

Асатте хапха уçать,
Асанне çăмхи тухать.

16

Ылтăн алăк уçăлать –
Çутçанталăк çуталать.

17

Касрăм-çуртăм юмана –
Пулчĕ икĕ такана.
Тинкеререх пăхрăм та –
Пĕрер çуркам пур унта.

18

Пурçăн тутăр çыхнăскер,
Симĕс енчĕк тытнăскер.

19

Çитĕнет вăл кăнтăрта,
Ик пуçĕнчен шĕвĕрлет.
Сарă чĕлли çăварта
Пыл пек тутлăн ирĕлет.

20

Хурçă кăна чĕрни пур,
Çĕре чавма ӳнер пур.

21

Чĕмсĕр пичче умăмра,
Пин алă ун, пĕр ура.

22

Ашшĕн пĕвĕ яштака,
Амăш кукăр-макăркка,
Хĕрĕ ӳснĕ лăпсăркка,
Ывăлĕсем хаяркка.

23

Асламасăн икĕ хĕр,
Иккĕшĕ те пит чипер:
Ылтăнтан тухйи пĕрин,
Кĕмĕлтен тухйи теприн.

Туптарусен тупсăмĕсем: 1. елка, 2. грузовик, 3. ĕне, 4. уйăх, 5. футбол, 6. щетка, 7. ялав, 8. эмел, 9. жираф, 10. ӳпре, 11. асамат кĕперĕ, 12. икерчĕ, 13. каç, 14. пас, 15. хĕвел, 16. ирхи шуçăм, 17.

йĕкел, 18. мăкăнь, 19. дыня, 20. плуг, 21. йывăç, 22. хăмла, 23. хĕвелпе уйăх.

## КЕРМЕНККЕ

Кантăк пек яка çулпа
Сăпка пек автобуспа
Хир-вăрман кура-кура
Çитрĕм шур Шупашкара.
Çӳллĕ-çӳллĕ çурчĕсем,
Çап-çутах чӳречисем.
Урамсем тăршши – çăка,
Сунчăк евĕр, лăпсака.
Тимĕр карлăклă кĕпер
Чĕнтĕрленĕ пек чипер.
Кĕтĕм кайрăм пĕр çуртне –
Аслă ывăл хваттерне.
Алăк уçрĕç туххăмра:
Салампи тăрать умра –
Каçăркка сăмсаллăскер,
Мăйрака çивĕтлĕскер.
Уртăнать мăнук мăйран,
Ыталать мĕнпур вăйран.
Чанкăл-чанкăл-чанкăлти
Чарăнми пуплет тути...
Шерпетпе хăналасан,
Калаçса ларкаласан,
Чĕнчĕ вăл аслашшĕне
Хăйĕн вăйă кĕтесне.

Пĕр чӳрече патĕнче
Хӳшĕ пекскер – ак тĕнче!
Хыçлă пукан хыçĕнчен,
Хыçне лартса ку енчен
Кантрапа кăкарнă та,
Капăр тутăр карнă та
Пĕр тăваткăл пӳлнĕ-мĕн.
Алăк та пур пӳлĕмĕн:
Чӳреченĕн чаршавне
Икĕ вĕçне ик енне
Карлăк урлă янă та –
Унăн шĕвĕр тăррине
Юр пек шурă хут çине
Тунă тухнă чечексем,
Çăлтăр евĕрлĕ хăйсем.
Чечек-мечек картине
Шăп та шаях варрине
Çырнă хунă сăвăлла,
Сăвăлла та чăвашла:
«Килĕр, килĕр хăнана,
Эпĕ хапăл яланах!
Юрататăп выляма,
Юрлама та ташлама.
Йыхăрать Нарспи сире,
Вăл кĕтет керменккере».
– Ку мĕнле Нарспи тата?
Керменкки вара ăçта?
– Эс мĕскерле, асатте, –
Курмастăн-им нимĕн те? –

Тет мăнукăм, ӳпкелет.
Вăл хайхи хӳшше тĕллет:
– Ку пулать, ак, керменкки –
Юмахри кермен пекки.
Керменккере чиперкке,
Хай Нарспи текен хĕркке... –
Пăхрăм та алăкĕнчен –
Чăн, кермен пекех иккен:
Янкăр çутă чӳрече,
Чечексем – чӳлмек çинче.
Тавралла – хитре пукан:
Кил, тархасшăн, – лар та кан.
Виç-тăватă пукане
Ларнă тухнă пĕр енне.
Сĕтелли тулли çиме –
Ан вăтан пырса илме:
Çырлапа улма, шерпет,
Сарă мăййăр илĕртет.
Темĕн чул тетте тăрать –
Куçăм-пуçăм алчăрать.
– Кураймарăм-ха кунта:
Ăçтарах Нарспи тата? –
Тетĕп эп ун-кун пăхса.
Салампийĕм васкаса:
– Лар-ха, – тет, – пукан çине. –
Хăй тытать пĕр пукане:
– Ак Нарспи. Эс кур-ха, кур:
Пуçĕнче тухйи те пур,
Тĕрĕленĕ кĕпине,

Çакнă янă шăрçине.
Ыттисем – ун тусĕсем,
Хăнара паян вĕсем.
Йăлтăрти пуçкăшăльпе,
Вăрăм-вăрăм кĕпипе
Килнĕ çитнĕ аякран,
Аякран та Мускавран.
Вырăс хĕрĕ, ыр пике –
Василиса чиперкке.
Йĕкĕчĕ пулать грузин,
Кăнтăртан вăл, йăрăс çын.
Тĕрĕллĕ калпакпала,
Хĕрлĕ шăлаварпала –
Вăл пулать тутар пики,
Пит çемçе ун пушмакки.
Сахал мар Нарспин туссем,
Килеймен кунта хăшсем...
– Кам туяннă кусене?
– Парнеленĕччĕ анне.
Тум-юмне çĕлерĕм хам –
Пулăшман мана никам.
– Ай ăста иккен те эс!
Юмахри пек ку кĕтес...
– Асатте, эс кур-ха, кур:
Ташлама вĕсем маттур, –
Тет мăнукăм кăмăлтан.
Нарспие илет малтан,
Тытăнать кĕвĕлеме,
Ташлаттарса çӳреме:

Линкка-линкка кĕввипе
Шутарать пушмакĕпе,
Аллине те султарать,
Пĕр вырăна çавăрать.
Ак тухать Мускав пики:
Çӳл кĕлеллĕ пушмакки
Шăкăрт-шăкăрт тутатрать,
Пĕр çĕрте тапса тăрать.
Грузина черет çитет:
Тухнă майăн ялт сикет,
Вĕттĕн-вĕттĕн вăл утать,
Чĕвен тăчĕ те – чупать,
Ăмăрткайăк вĕçнĕ пек,
Çĕкленсе çӳрет вăл тек.
Тухрĕ ак тутар пики,
Килĕшет утти-сикки:
Тайăлать енчен енне –
Тĕрлĕрен ĕç тунине
Аллипеле кăтартать,
Тĕк пек çăмăллăн утать...
Курасах килет пулсан,
Хушăран ерçӳ тупсан
Çитĕр шур Шупашкара,
Юлмĕ кăмăлăр вара.

**ТĔРЛĔ ХАЛĂХ СĂВВИ-ЮРРИ**
**КАМ ВĂЙЛĂРАХ ТĔНЧЕРЕ**

(Балкарсен)

– Хĕвел вăйлăрах çакă çут тĕнчере,
Вăл чи хăватли çакă çут тĕнчере!

– Вăл чи хăватли чăнахах та пулсан –
Хуплаймĕччĕ пĕлĕт ăна нихăçан!

Эппин, пĕлĕт çеç вăйлăрах тĕнчере,
Вăл чи хăватли çакă çут тĕнчере!

– Вăл чи хăватли чăнахах та пулсан –
Шывне çĕр илеймĕ унран нихăçан!

Çĕр çеç вăйлăрах çакă çут тĕнчере,
Вăл чи хăватли çакă çут тĕнчере!

– Вăл чи хăватли чăнахах та пулсан –
Çиеймĕччĕ сурăх çаран нихăçан!

Эппин, сурăх çеç вăйлăрах тĕнчере,
Вăл чи хăватли çакă çут тĕнчере!

– Вăл чи хăватли чăнахах та пулсан –
Путек парас çук хăнана нихăçан!

Хăна вăйлăрах çакă çут тĕнчере,
Вăл чи хăватли çакă çут тĕнчере!

– Вăл чи хăватли чăнахах та пулсан –
Шăши касас çук йĕнерне нихăçан!

Шăши вăйлăрах çакă çут тĕнчере,
Вăл чи хăватли çакă çут тĕнчере!

– Вăл чи хăватли чăнахах та пулсан –
Кушак шăшие тытас çук нихăçан!

Кушак çеç, эппин, чи вăйли, хăватли,
Минтерĕ те ун чи çемçи, чи хăтли.

Çиет вăл çынсен чи паха çимĕçне,
Ун чапĕ саланнă тĕнче талккишне.

**ТОДОРЧО**

(Пăлхарсен)

Тодорчо ларать садра
Ешĕл курăк хушшинче,
Кĕлчечекĕн айĕнче,
Лăстăр сирень тĕлнерех.
Кĕнеке уçа-уçа,
Çырнине вула-вула,
Вăл йĕрет куççулĕпе.
Амăшĕ те, ашшĕ те
Ан курайччăр теейсе,
Йăпăрттин шăлса илет.

Пурпĕр курчĕ амăшĕ,
Тодорча çапла калать:
– Тодорчăçăм-Тодорчо,
Ма йĕретĕн, ывăлăм?
Çапăçса вилмен аçу,
Сан аннӳ те сывă-çке...

## МИХХЕ ПЕРСЕ ЧИКЕÇÇĔ

(Еврейсен)

Карчăккипе старикĕ
Çӳреççĕ урамра.
Тем пысăкăш ик михĕ
Пур, тет, вĕсен çумра.

Хăйсем хăрушă саслă,
Килтен киле çӳреççĕ.
Макра ача курсассăн,
Миххе персе чикеççĕ.

## ÇИЧĔ ЫВĂЛ

(Еврейсен)

Пурăннă, тет, пĕр пӳртре
Карчăк çитмĕл çиччĕре.
Пурăннă, тет, унпалан
Çичĕ ывăлĕ ялан:
Çакăн евĕр пуçлă,
Çакăн евĕр куçлă,

Çакăн пек хăлхаллă,
Çакăн пек сухаллă,
Çакăн пек хырăмламас,
Çакăн евĕр кутамас,
Çакăн евĕр аллă,
Çакăн пек ураллă.
Нимĕн те ĕçесшĕн мар,
Нимĕн те çиесшĕн мар.
Пурăнаççĕ ыр курса,
Пурăнаççĕ юрласа –
Суеççем те вĕрӳççем –
Çавăн çинчен юррисем,
Çилçунатлă ут çинчен,
Пĕчĕкçеççĕ йыт çинчен.
Атьăр эпĕр те пуçлар,
Вĕсемпе пĕрле юрлар.

## СЮЗОНПА ЛĔПĔШ

(Французсен)

Сюзон шкула каятчĕ,
Ун шкулĕ çывăхра.
Вĕçме пуçларĕ лĕпĕш
Сюзон йĕри-тавра.

Вĕçме пуçларĕ лĕпĕш
Сюзон йĕри-тавра.
Сюзон ăна каларĕ:
– Ална парсам, ара! –

Сюзон ăна каларĕ:
– Ална парсам, ара!
Шкулта эс вĕренместĕн,
Пурнатăн ырлăхра.

Шкулта эс вĕренместĕн,
Пурнатăн ырлăхра.
Хаваслăн çаврăнар-и
Урам йĕри-тавра?

Хаваслăн çаврăнар-и
Урам йĕри-тавра?
Сыв пул, сыв пул, тăванăм,
Янрарĕ шăнкăрав!

**БУТЕРБРОД**

(Акăлчансен)

Путĕр-путĕр бутерброд
Ирхине
Хапхаран пăхса тăрать
Тул енне.

Вăл çӳресшĕн уçăлса
Ирĕкре,
Вăл курасшăн выляса
Çеремре.

Хĕрлĕ питлĕ, кăпăшка
Булкăна
Илĕртет вăл аякка
Хăнана.

Чанкăлтатрĕç чашăксем,
Ятласа калаç вĕсем:
«Эй, ухмах,
Ан хăй тухма,
Хапхаран инçе кайма-утма.
Тухсанах
Ак сана
Мăр-мăр хыпĕ кап! кăна.

Мăр-мăр хыпĕ,
Мăр-мăр хыпĕ,
Мăр-мăр хыпĕ
Кап! кăна».

## ĂÇТА ПУЛТĂН, КАЧАКАМ?

(Латышсен)

Ăçта пултăн, качакам?
– Арманта, арманта, ыр хуçам.
Унта эсĕ мĕн турăн, качакам?
– Тулă-ыраш пуçтартăм, ыр хуçам.
Мĕнпе шăлса пуçтартăн, качакам?
– Сухалăмпа, сухалăмпа, ыр хуçам.
Ăна мĕнпе эс виçрĕн, качакам?

– Мăйракапа, мăйракапа, ыр хуçам.
Ăна мĕнпе хăйрарăн, качакам?
– Чĕрнемпе, чĕрнемпе, ыр хуçам.
Чикмерĕн-и вăрласа, качакам?
– Вăрларăм çав, вăрларăм, ыр хуçам.
Тытмарĕç-и, качакам?
– Тытрĕçĕ çав, тытрĕçĕ, ыр хуçам.
Хĕнемерĕç-и, качакам?
– Хĕнерĕç çав, хĕнерĕç, ыр хуçам.
Сана мĕнпе хĕнерĕç, качакам?
– Вут сыппипе, вут сыппипе, ыр хуçам.
Макăрмарăн-и, качакам?
– Макăртăм çав, макăртăм, ыр хуçам.
Эсĕ мĕнле макăртăн, качакам?
– Мекеке-ек, мекеке-ек! терĕм, ыр хуçам.

**КУЯН ЫВĂЛĔСЕМ**

(Латышсен)

Виçĕ ывăл куянăн,
Ылтăн алă пурин те:
Тимĕрçĕ тет Петтерĕ,
Янис кăмрăк хатĕрлет,
Виççĕмĕшĕ, Яккăвĕ,
Çӳрет вăрăм кимĕпе.

**ПӲРНЕ ВĂЙИИ**

(Йорубасен)

Ку калать:

– Хырăм выçрĕ – чĕпĕтет, – тет.

Ку калать:

– Анне килте çук, – тет.

Ку калать:

– Кӳрше кайса çиер, – тет.

Ку калать:

– Хуçи тытать, – тет.

Ку калать:

– Эп хуралта тăрăп, – тет.

## ИНИ, МИНИ

(Американецсен)

Ини, мини, майни, май,
Уринчен пулла тытай.
Кăшкăрсассăн вăл «ай-яй»
Каялла килне ярай.

## ПĔРРЕ ЭП КУРТĂМ

(Американецсен)

Пĕрре циркра эп куртăм пĕр слона.
Вăл çĕр çинчен ялт сикрĕ балкона.
Кайран сиксе хăпарчĕ тӳпене,
Çӳлтен анмасть хальччен те çĕр çине.

## ЙЫТ ПУЛЛИСЕМ

(Корней Чуковскирен)

Ăшă шыв лупашкара,
Йыт пулли лăках шывра:
Шăпăртатрĕç ташласа,
Чăмпăлтатрĕç выляса,
Ишрĕç, чăмрĕç ай-вай-вай!
Чикеленчĕç тĕрлĕ май.

Шапа, ватăскер,
Хуралçă пекскер,
Ларать тĕм çинче,
Çип-йĕп аллинче,
Çыхать чăлхине,
Пуçлать лешсене
Хытах хăтăрма:
– Вăхăт çывăрма!
– Ах, асанне,
Ах, ырă асанне!
Выляр-и татах?
Эс лар-ха кăштах.

## ЧĔРĔП КУЛАТЬ

(Корней Чуковскирен)

Икĕ нăрă чĕрĕпе
Йĕп сутаççĕ пĕр ирпе.

Чĕрĕпĕ кулса ярать,
Кулнă майăн тавăрать:

«Эх, эсир ытла айван!
Эпĕ хам йĕпрен пуян.
Пĕтĕм пĕвĕм йĕплĕ ман».

**САВĂНĂÇ**

(Корней Чуковскирен)

Савăк, савăк, савăк
Çутă тирексем,
Çурăлчĕç вĕсем çинче
Хĕрлĕ чечексем.

Савăк, савăк, савăк
Тĕксĕм хурама.
Çавăнпа та ун çинче
Тăп-тулли хурма.

Çумăр мар çăвать çӳлтен,
Çиçкĕнмерĕ çиçĕм –
Тăкăнса тăрать çӳлтен
Витĕр пиçнĕ иçĕм.

Йăмрасем çинче курак
Шăпчăкла юрларĕ ак.

Тăрă шыв пал-пал тухать,
Пыл пек тутлă вăл юхать.

Турткăш пулчĕç чăхăсем,

Кăтра пуçлă – кукшисем.

Ватă шыв арманĕ те
Ташлама пуçларĕ тем.

Çĕкленет юхан шывран
Асамат кĕперĕ.
Чупăр, чупăр ман хыçран,
Кам мана çĕнтерĕ?

## ЛАПĂРЧĂК

(Корней Чуковскирен)

Панă Марука тетрадь,
Хăй сăрлать те хăй çырать.
- Ку вăл – чăрăш, ку – така,
Ку вăл – каçăр качака.
Ку – мучи, сухаллăскер,
Ку вăл – пӳрт, мăрьеллĕскер.
– Ку тата, Марук, мĕскер,
Ăнланса илме çукскер:
Вун уроллă,
Вунă мăйракаллă.
– Ку вăл – Лапăрчăк,
Çыртаканскер.
Хам шутласа тупрăм.
– Ма пăрахрăн тетрадьне,
Ӳкерместĕн ыттине?
– Лапăрчăкран хăратăп.

## ЭРЕШМЕН ТУЙĔ

(Юстинас Марцинкявичюсран)

Тĕрлĕ-тĕрлĕ нăрăсен
Пуçлăхĕ – мăн эрешмен,
Ячĕ унăн – Ярăнтай,
Ун умне пуçна эс тай!
Авланма вăл шухăшлать,
Хĕвеле хайхи куçлать.
Хăй вара турат çумне
Кăкарасшăн арăмне:
Ыттисене ан çутат,
Эрешмене çеç йăпат –
Ир те каç йăл култăрин,
Тек анса ан лартăрин,
Юнашаррăн унпалан
Ярăнтăр чуччупалан.

Пĕринче ирпе ирех,
Сар хĕвел тухсан тӳрех,
Кайăк-кĕшĕк, ай-ай-ай,
Çуйăхашать шăй та шай.
Пĕрисем хăра-хăра,
Теприсем янра-янра
Саламлаççĕ хĕвеле:
Рам-та-три-ля!
Три-ле-ле!
Ир тăран улатакка

Çăвăннă та – яп-яка.
Чӳхенет çерçи шывра:
– Чим! Хĕвел ман алăра!..
Нăрăсем ун сăмахне
Час пĕлтерчĕç патшине:
– Хĕвеле вăрлать çерçи!
Йăлт сăхса пĕтермĕ-ши?!
– Пирĕн вăл! – тет эрешмен,
Хăйĕн măйăх та ӳсмен.
– Тăр хăвăртрах, Ярăнтай!
Хĕвеле илмешкĕн кай.
Ун çути çитмест пире, –
Вăл пит кирлĕ тĕттĕмре:
Курăкри патшалăха
Çутă сăрхăнать сахал.
– Ну, мĕнех, – тет эрешмен, –
Сирĕнтен эп иртеймен.
Туй тăвар, эппин, ай-вай! –
Авланас тет Ярăнтай.
– Сывă пултăр Ярăнтай! –
Кăшкăраççĕ шăй та шай:
– Хĕвел пирĕн, пирĕн! – теç. –
Вăл çутатĕ пире çеç.
Хăраса ӳкет тăри:
– Сар хĕвелсĕр юлăр-и?
Ĕнсине хыçать чакак:
– Хăй, хĕвел, пĕлет-и çак?
– Хĕвел пирĕн! – тет çăхан, –
Памăпăр юта нихçан.

Çук, хĕвел эршменпе
Килĕштермĕ ĕмĕрне.
– Кансĕрлемест вăл мана, –
Тет хăвăлтан тăманна.
– Ах, патшамăр эрешмен
Мăнтăр мар-и виçерен? –
Тет улитка черетпе
Хăйĕн çинçе сассипе. –
Пурçăн çип ун мĕн тери!
Пур-и ун пек чиперри?

Ярăнтай ыйха ярать,
Пит кая юлса тăрать.
Пăхрĕ те – хĕвел инçе,
Ĕнтĕ хырлăх тăрринче –
Вĕçсĕр-хĕрсĕр тӳпере
Вăл çӳрет халь ирĕкре.
Эрешмен апат çиет,
Таврана пăхса илет:
– Çывăхарах киличчен
Тăхтамалла пулĕ тен?..
Хай ыйха çапать кăна,
Çип карти тытать шăна.
Нăрăсем ак туххăмах
Хатĕрленчĕç туй тума:
– Пулĕ туй!
– Сикер ай-хай!
Сывă пултăр Ярăнтай!..

Хĕртрĕ хĕвел кунĕпе,
Вăл анать каç пулттипе.
Чакăлтатрĕ те чакак,
Кăсăя сас пачĕ ак:
– Эй, хĕвел, качча ан кай!
Путсĕрсер вăл, Ярăнтай!
Серепене çакланан,
Тӳперех çӳре ялан!

Вăранать патша кĕçех,
Пуçĕнче туй шухăш çех.
Хĕвĕшеççĕ нăрăсем:
– Туй пуçлар! – теес вĕсем.
Хай патша карать карта
Çӳл туратран турата.
Шуса анан хĕвеле
Кап! çаклатрĕ тетеле.
Нăрлатаççĕ нăррисем:
– Лекрĕ-и-ха! – теç вĕсем. –
Тыт хытăрах çивĕтрен,
Туртса кăлар пĕлĕтрен!..
Леш туртать, тапаланать,
Кайрĕ ĕнтĕ халтанах.
Шатăртатать тип турат,
Эрешмен ӳке парать.
Мăкăль тухрĕ çурăмне,
Ыраттарчĕ хăй пуçне!
Нăррисем чупса çитеç:
– Ах, хĕвел, ăçта? – тееç.

Найкăшать хай эрешмен,
Кирлĕ тухтăр-терĕш-мĕн.
Чĕнчĕç икĕ шăрчăка:
– Кĕвĕ калăр пĕр авка!..
Лешсем вара пĕр харăс
Сĕрме купăс каларĕç.
Çаксен кӳрши кукамай
Мăкăле пусать пĕрмай,
Тĕрлĕрен кĕпçе шывне
Ĕçтерет эрешмене.
Лешĕ ĕçет йĕрĕнсе,
Тек пăхать хăй виçĕнсе.
Шыçмакланать Ярăнтай,
Нăрăсемшĕн савнăç хай.
Тарăхать, вăрçать патша,
Сывалаймасть, апăрша:
Шăрчăксемпе кукамай
Пулăшайман пит нумай.
Кăсăя йăлт-ялт сикет,
Куншăн питĕ хĕпĕртет.
– Тĕсĕ! – тет улатакка
Йывăçа такка-такка. –
Кайрăн пулсан эс ăнтан –
Халь те хăтăл асатран!..

Парăнмарĕ эрешмен,
Çип карать вăл çĕнĕрен.
Йĕри-тавра турата
Тухрĕ вăл карса карта –

Туратран та курӑкран,
Ӑвӑсран та сар хыртан.
Серепе сар хӗвеле
Чеерех мелӗпеле
Кап! çеç тытса илессе
Ярӑнтай тӑрать кӗтсе.
Тытсанах йӗри-тавра
Тӗттӗм пулӗччӗ вара.
Хӗл çитсессӗн е çулла
Эс тухаймӑттӑн çула.
Ма тесен хӗвел лексен
Çути пӗтӗ çак тӗнчен...

Эрешменӗн картине
Сар хӗвел çакланнине
Курсассӑнах ӑнсӑртран
Çӑлӑр ӑна тыткӑнран,
Ярӑр ӑна çӳлерех,
Вӑл çутаттӑр чиперех
Уй-хирсене,
Чечеке,
Пакшасене,
Путеке,
Кайӑксене,
Çереме,
Йывӑçа та этеме,
Упана та кашкӑра,
Вӗсемпе пӗрле...
Нӑрра.

## ÇУРКУННЕ

(Надя Кехлибареваран)

Кĕлчечек тăкать шыва
Тутлă шăршлă çеçкине.
Çӳрĕç пулăсем шавах
Тăхăнса çĕн юбкине.

## ЧУЧЧУ

(Надя Кехлибареваран)

Вĕçрĕ, çӳçентерчĕ,
Тӳпенех çитерчĕ.
Сеп-сенкер – саппунĕ унăн,
Перĕнет ура ун-кунăн.

## ХĔВЕЛ АНАТЬ

(Надя Кехлибареваран)

Сар хĕвел те ывăнать,
Юхан шыв çине анать.
Сивĕ шыв ĕçет унта,
Çывăрать сĕм вăрманта.

## ПĂЛАН

(Агния Барторан)

Çук ыйхи Сережăн кĕçĕр,

Тинкерсе пăхать вăл вĕççĕр
Çӳллĕ пӳллĕ пăлана,
Улăхра çӳренскере –
Çӳллĕ пӳллĕ пăлана,
Маччара курнанскере.

Вăл илемлĕ те мăнаçлă,
Чанк тăрать ун мăйраки.
Ешĕл улăх тĕксĕм, аслă,
Çӳллĕ курăк – ик айкки.

Чĕркуçленчĕ те Сережа
Сăнаса пăхать темччен:
Çурăк йĕрĕ çеç-мĕн лешĕ –
Тĕлĕнтермĕш те иккен!

Чаршава уçсан вăранчĕ,
Вăл каларĕ ирхине:
– Çук, хайхи чăнах пăланччĕ,
Халь вăл кайнă ту çине.

**АКĂШ ИНКЕКĔ**

(Агния Барторан)
Сип-сив паркра
Пăр хушшинче
Юлайрĕ акăш.
Вăл пĕччен.

Амантнă, ахăр,
Çунатне,
Тен, хуçнă пулĕ –
Инкек çакланнă
Мĕскĕне:
Ун усăк хулĕ.

Тухатăп
Акăш çывăхне.
Пĕлеттĕм
Унăн кил-йышне.

Чĕпсем
Хăйсен амăшĕпе
Ишсе йăпанчĕç,
Анчах та
Тем тамашипе
Таçта ăсанчĕç.

Сип-сив паркра
Пăр хушшинче
Юлайрĕ акăш.
Вăл пĕччен.

Ăна
Час-час аса илсе
Çӳретĕп эп
Кунта килсе.

Шутларӑм пулӑшмашкӑн,
Шур акӑш пек пулмашкӑн.
Шап-шурӑ эп,
Юр витнӗскер.
Мӑя та аврӑм,
Хайхискер.

Шап-шурӑ юр хуплать кӳлле.
– Тӑнла-ха акӑш, - тетӗп. –
Ишер-и иксӗмӗр пӗрле?
Ҫӗр тӑрӑх эп ишетӗп.

Алла ҫӗклерӗм,
Ҫунат пек.
Вӗҫме май ҫук-ҫке
Каплипех!

Сип-сив паркра
Пӑр хушшинче
Салху шур акӑш.
Вӑл пӗччен.

## КАЙӐК ТУЙӖ

(Калина Малинаран)

Шӑрчӑк тусӑм,
Шӑрантар:
Ташласа сикер вӑр-вар!
Авланать халь

Шăкăлчи,
Çерçи пулчĕ
Ун евчи.
Шăпчăка качча илет,
Леш пуçне усса
Хӳхлет.
Курак хуран çакнă та
Тем пăтратать
Вăл унта.
Хапăл туса
Хăнана
Кĕтсе илет
Пĕр чана.
Илчĕç лешсем
Тавçăрса:
Май килмест
Пăхса тăрса.
Пуринчен те кулăшла
Пилеш кайăкĕ
Ташлать:
Тăхăннă вăл
Хăй пуçне
Ешĕл чечек кăшăлне,
Темĕн тирнĕ
Сăмсаран,
Çунат пек вăл
Аякран.

**САРĂ КАЙĂК**

(Калина Малинаран)

Чĕвĕлтетĕ,
Чĕвĕлтетĕ
Сарă кайăк.
Чĕвĕлтетĕ,
Вăл калайĕ:
«Эй, аван-и!
Кам вăранĕ
Иртерех,
Кам тӳрех
Пуçлать ĕçе –
Ун кĕçех
Юрри ян! кайĕ!»
Чĕвĕлтетĕ,
Чĕвĕлтетĕ
Сарă кайăк.

## ТĔРЛĔ ТĔСЛĔ СĂМАХСЕМ

(Генрих Сапгиртан)

Курăкăн – сип-симĕс сăмахсем,
Илтĕнеççĕ шăппăн çеç вĕсем.

Çил сăмахĕ – сеп-сенкер сăмах,
Пултарать килентерсе тăма.

Сар хĕвелĕн – хăй пекех сап-сар,
Ылтăн сăвă-юрă сахал мар.

Итлеме чĕнетĕп туссене
Çил, хĕвел те курăк сассине.

**ТУПМАЛЛИ**

Çĕнĕ çул уявĕ

Йĕлтĕрпе

Кайăксем мĕншĕн тĕрлĕ тĕслĕ

Пакша

Перкелешĕр, выльăр юлашки юрпа

Пĕчĕк туратна памăн-ши мана?

Кăсăя

Тĕлĕк

Курак чĕпписем

Маринепе лĕпĕшсем

Çăлтăрсен вăййи

Улăп евĕрлĕ пуласчĕ

Уйăхпи валли

Ярăнтарăттăм сире

Кăчăрми

Хĕрлĕ кайăк

Шăпа сăввисем

Тыт мана

Курăнман çĕлĕк

Çумăр

Мерекке

Кулăшла йăран

Пĕчĕкçĕ Пайтул

Тух, Винни-Пух!

Ан тив!

Тиркешӳ

Утьăкка

Хăвăртрах çиер

Санпала вылясчĕ ман

Ан макăр

Икĕ çура

Çулçă тăкăнать

Катăркас

Айяра

Эрнюк аппа ачисем

Кĕтерне

Ача-пăча хулинче

Туптарусем

Керменкке

**Тĕрлĕ халăх сăвви-юрри**

Кам вăйлăрах тĕнчере

Тодорчо

Миххе персе чикеççĕ

Çичĕ ывăл

Сюзонпа лĕпĕш

Бутерброд

Ăçта пултăн, качакам?

Куян ывăлĕсем

Пӳрне вăййи

Ини, мини

Пĕрре эп куртăм

Йыт пуллисем

Чĕрĕп кулать

Савăнăç

Лапăрчăк

Эрешмен туйĕ

Çуркунне

Чуччу

Хĕвел анать

Пăлан

Акăш инкекĕ

Кайăк туйĕ

Сарă кайăк

Тĕрлĕ тĕслĕ сăмахсем

ЮМАРТ (ТРОФИМОВ) ГЕННАДИЙ ФЕДОРОВИЧ

# НА УЛЫПА СТАТЬ ПОХОЖИМ

**Стихи и переводы**

**На чувашском языке**

**Для детей младшего возраста**